# Çĕнĕ 2010 çул ячĕпе саламлатпăр!


# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

*105 (7745) №* ✻ *Юн кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 30-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*


**САЛАМЛАТĂП!**
**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Каллех календарĕн юлашки страницине хупмалли, паллă пулăмсене, тунă çитĕнӳсене аса илмелли, малашлăха илсе каякан çулсене тепĕр хут хакламалли вăхăт çитрĕ. Çĕнĕ вунă çуллăха çул уçакан, вĕçленекен çулталăк Чăваш Еншĕн, пирĕншĕн пуриншĕн мĕнлерех пулчĕ?

Пирĕн ĕçченсем – чăн-чăн патриотсем – çине тăнипе тата иртнĕ çулсенче ĕçленипе республика ансат мар вăхăтра Раççейри тата чикĕ леш енчи пысăк инвесторсемшĕн хăйĕн илĕртӳлĕхне упраса хăварма кăна мар, ӳстерме те пултарчĕ. Çакна çирĕплетекенни – тĕрлĕ сферăра чăнласах пысăк проектсем пурнăçлама тытăнни. Хĕвел модулĕсем кăларакан тĕнче шайĕнчи завод строительстви пырать. Пĕрлех наукăпа тĕпчев центрĕ пулать. Çавна май Раççей экономикин çĕнĕ отраслĕ çуралать – хĕвел энергетики. Испани бизнесĕн пирĕн çĕршыв промышленноçĕн аталанăвне хывакан чи пысăк инвестицийĕ Чăваш Ене килет. Миллиард-миллиард тенкĕ укçа хывни пире лайăх ĕç укçиллĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме, мĕн пур шайри бюджетсене çирĕплетме май парать. Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр фончĕ вăй илсе пырать, вăл пулăшнипе çĕр-çĕр çемье çурт-йĕр ыйтăвне татса памалли хушма майсемпе усă курма та ĕлкĕрчĕ.

Вăхăтра йышăннă мерăсем кризис тапăнăвне хирĕç тăма пулăшрĕç. Халăха ĕçпе тивĕçтерессине патшалăх енчен хушма пулăшу кӳни пин-пин çынна ĕçлев енĕпе тухса тăнă çивĕч ыйтусене татса пама, хăйсен ĕçне пуçарма, малтанах профессие вĕренме, çапла майпа конкуренци авăрĕнче путасран сыхланма пулăшрĕ.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче республикăри аграрисем лайăх кăтартусемпе савăнтарчĕç. Экспертсем паха тата экологи енĕпе таса тесе хаклакан ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларассине ӳстерме пултарчĕç. Отрасль çитĕнĕвĕсем, эпир ку енĕпе тимлĕ пулни инвесторсене илсе килме пулăшать, вĕсем агропромышленноç комплексĕн тухăçлă ĕçлекен предприятийĕсене йĕркелес ĕçе пысăк укçа хываççĕ.

Яваплăха туйса çакна палăртасшăн: эпир тĕпе хуракан тĕллевсене пурнăçлассине нимĕнле кризис пулăмĕсем те ура хураймĕç. Çак шутра – çĕнĕ йышши сывлăх сыхлавĕ, паха вĕрентӳ, хуласемпе ялсенче ĕçлеме тата канма хăтлă условисем туса хурасси. Вĕçленекен çулталăкра Чăваш Ен картти çинче çĕнĕ физкультурăпа спорт комплексĕсем, шкулсем, культура учрежденийĕсем, общество инфратытăмĕн объекчĕсем çуралчĕç. Палăртма кăмăллă: ача çуратасси ӳснипе тата çынсем вилесси чакнипе çыхăннă туртăмсем çирĕп.

Эпир сирĕнпе пĕрле вăй хунин кăтартăвĕсене вĕçленекен çулталăкра Раççей Федерацийĕн Правительстви пысăка хурса хакларĕ. Чăваш Ен ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕç-хĕлне уйрăмах тухăçлă тесе хакланă пилĕк регион шутне кĕчĕ. Анчах умра пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем нумай-ха. Вĕсен шутĕнче – экологие тĕпе хурса çĕнĕлĕхсемпе çине тăрса усă курасси, экономика тытăмне çĕнĕлле йĕркелесси. “Электрон правительствин” элеменчĕсене ĕçе кĕртессине малалла тăсни Чăваш Ене çынсемшĕн май пур таран хăтлă “справкăсăр республика” туса хума тивĕç.

Чăвашсем “ырлăхран ырман” теççĕ. Иккĕленместĕп: Тăван çĕршыва юратни, уншăн тăрăшни, хуласемпе ялсенче пурăнакансен профессионализмĕпе ырми-канми ĕçĕ пирĕн тăрăха тата та илĕртӳллĕрех тумалли никĕс пулса тăрĕ.

Ытарма çук ырă та нумайччен кĕтнĕ Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсен ячĕпе сире чунчĕререн саламлатăп!

Çак асамлă кунсенче кашниех пĕтĕмлетӳсем тăвать, малашнехи тĕллевсене палăртать. Çывхарса килекен Вĕрентекен çулталăкĕнче эпир тата та нумай пархатарлă та ырă ĕç туса Чăваш Ене хăтлăрах та илемлĕрех тăвасса, экономика хăватне ӳстерессе, çĕнĕ производствăсем йĕркелессе, хуçалăх ĕç-хĕлне вăйлăрах аталантарасса шанатăп. Пирĕн тĕп тĕллев – тăван тăрăхра пурăнма лайăх та тивĕçлĕ майсем туса парасси. Кашни çын республикăмăрпа мăнаçланма пултартăр. Çĕнĕ çулта сирĕн çутă та пысăк ĕмĕтĕрсем пурнăçланса пыччăр! Çирĕп сывлăх, çĕнĕ ăнăçусем, иксĕлми вăйхал, юрату тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**



## Вулакансене пĕлме

# Уявсенче сыхă пулĕç

***Район çыннисем уявсенче каннă кунсенче тивĕçлĕ службăсем хăйсен ĕçне малалла тăсĕç. Кун пирки эпир районти тĕп больницăн тĕп врачĕпе В. Даниловпа, районти патшалăх пушар надзорĕн пуçлăхĕпе И. Смирновпа, «Чувашсетьгаз» уçă акционерсен обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ертӳçипе Р. Чебеновпа, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компанин пуçлăхĕпе Н. Любимовпа çыхăнтăм.***

**В. ДАНИЛОВ:**

– Уяв кунĕсем вăрăма тăсăлни сывлăх сыхлавĕ ыйха путать тенине пĕлтермест. Дежурнăй служба яланах ĕçре пулать. Январĕн 1-2-мĕшĕсенче чирлисене дежурнăй служба йышăнать. Январĕн 3 тата 9-мĕшĕсенче больница шăмат кун графикĕпе ĕçлĕ. Январĕн 4-5-мĕшĕсенче дежурнăй служба йышăнĕ. Январĕн 6-мĕшĕнче – ĕç кунĕ. Январĕн 7-8 тата 10-мĕшĕсенче дежурнăй служба йышăнĕ. Уйрăмсенче дежурнăй врачсем пулĕç. Кунсеренех васкавлă пулăшу ĕçлĕ.

**И. СМИРНОВ:**

– Пушар хуралĕшĕн уяв çук: эпир кулленех ĕçре. Инкек сиксе тухсан 62-7-34 е 01 номерпе шăнкăравлама ан манăр. Кĕсье телефонĕсемпе усă куракансен инкек сиксе тухас пулсан пушар хуралĕпе çапла çыхăнмалла: Би-Лайн – 010 е 112 (шăнкăрав Шупашкарти дежурнăй службине каять). МТС – 010 (шăнкăрав Шупашкарти дежурнăй службине каять). Мегафон операторĕсемпе ĕçлекенсен инкек вăхăтĕнче 112 е 01-01-01, е 01(çăлтăр) номерсемпе шăнкăравламалла. Шăнкăравсем Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн 62-7-34 телефонĕ çине пыраççĕ.

**Р. ЧЕБЕНОВ:**

– Çĕнĕ çулăн кану кунĕсенче газ службин аварипе çăлавçăсен отрячĕ пĕр канусăр ĕçлĕ. Инкек сиксе тухсан пирĕнпе çыхăнмалли телефонсем: 04 е 60-2-24.

**Н. ЛЮБИМОВ:**

– Районти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн икĕ предприятийĕнче те çирĕплетнĕ графикпа бригадăсем талăкĕпех дежурствăра тăрĕç. Диспетчерсен телефонĕсем: 62-6-37, 62-3-74 (Муркашра), 69-4-50, 69-2-08, 69-4-38 (Мăн Сĕнтĕрте).

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

# Çĕнĕ çулхи каникул – 10 кун

Раççей Федерацийĕн гражданĕсемшĕн 2010-мĕш çул 10 кун тăсăлакан каникулпа пуçланать. Январĕн 1-5-мĕшĕсем – Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн канмалли кунсем шутланаççĕ. Январĕн 1 тата 2-мĕшĕсем шăмат кунпа вырсарни кун пулнăран, январĕн 6 тата 8-мĕшĕсенче те канатпăр. Январĕн 7-мĕшĕ – Иисус Христос çуралнă кун – уяв. Январĕн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕ календарь тăрăх канмалли кунсене лекеççĕ. Çапла вара 10 кун пухăнать те.

## Çулталăка пĕтĕмлетсе

# Малалла та пĕрлех, пĕр тĕллевпех вăй хурар

Хаклă ентешсем! Иртнĕ çулти ĕçсене пĕтĕмлетсе çĕнĕ çулти задачăсене палăртнă вăхăт кашни çыншăнах ответлă самант. 2009 çулта ĕçре йывăрлăхсем те сахал мар пулчĕç, çав вăхăтрах Муркашсем кашни отрасльтех курăмлă çитĕнӳсем те тума пултартăмăр.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче пĕтĕмпе ял хуçалăх продукцине килти хушма хуçалăхсемпе пĕрле 2008 çулхинчен 5 процент ытларах – 1645,0 млн. тенкĕлĕх туса илтĕмĕр. Тыр-пул 15 процент нумайрах – пурĕ 34,9 пин тонна туса илтĕмĕр. Вăтам тухăç 23,9 центнерпа танлашрĕ. Ку кăтарту Муркашри чăхчĕп фабрикинче 50,1, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 38,3, «Ударникра» 32,5 , Ильич яч. хис. хуçалăхра 33,1, «Геройра» 32,2, «Востокра» 31,1, Суворов яч. хис. хуçалăхра 28,8 центнер пулчĕ.

Çĕр улмие те 2008 çулхинчен ытларах (3,6 процент) –57,9 пин тонна туса илтĕмĕр. Анчах та тухăçĕ малтанхинчен пĕчĕкрех пулни пире ку енĕпе татах та тăрăшарах ĕçлеме хистет. Вăл «Ударник» (167,8 центнер), Чапаев яч. хис. (163,7 центнер), «Оринино» (163,1 центнер), «Герой» (154,6 центнер), Ильич яч. хис. (226 центнер) хуçалăхсенче пысăк пулчĕ.

2009 çулта кĕрхи культурăсен лаптăкĕсене те малтанхи çулхинчен 2000 гектар чухлĕ пысăклатрăмăр: пурĕ 6752 гектар йышăнаççĕ вĕсем. Кĕрхи çĕртмене 8 пин гектар çинче туса irttertĕmĕр. Малтан усă курман 1592 гектар çĕре ĕçе кĕртрĕмĕр. Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис., «Ударник» хуçалăхсем уйрăмах тимлĕн ĕçлерĕç ку енĕпе. Пушă выртакан çĕрсем пирĕн тата та пур, çавăнпа та малалла та çине тăрсах ĕçлемелле.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче те ырă утăмсем пур. Сĕт суса илессипе район республикăра 2 вырăнта: 51120 тонна е малтанхи çулхинчен 4 процент ытларах туса илнĕ. Ку вăл республикăра туса илекен сĕтĕн 9,9 проценчĕ пулать.

Сĕт туса илессипе уйрăмах Суворов яч. хис., «Герой», «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Аш туса илессипе вара пирĕн татах та ăнăçлăрах ĕçлемелле: республикăри районсем хушшинче Муркаш районĕ аш туса илессипе 6 вырăн йышăнать: 2009 çулта 7700 тонна туса илтĕмĕр. Ку енĕпе хуçалăхсен умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Выльăхсен йышне ӳстерессипе тата талăкри ӳтхушаслăхне хăпартассипе чылай ĕçлемелле пулать.

Çулсеренех районта çăмарта туса илесси те ӳссех пырать. 2009 çулта кашни чăхран ун умĕнхи çулхинчен 9 çăмарта ытларах – 324 штук илнĕ.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртессипе те ӳсĕмсем турăмăр. Çулталăк пуçламăшĕнче «Свобода» хуçалăхра 1200 пуç вырнаçмалăх сысна ферми хута кайрĕ. «Ударник» хуçалăхра 100 пуç вырнаçмалăх тепĕр вите хута кайрĕ, кунта сĕт пăрăхне вырнаçтарчĕç.

Ĕçлеме пăрахнă фермăсене ĕçе кĕртессипе те татăклă утăмсем турăмăр. Анатолий Валентинович Акимов предприниматель «Передовик» хуçалăхăн Рыккакассинчи сысна фермине реконструкци туса хута ячĕ. Сергей Валерьевич Данилов, Александр Аркадьевич Афанасьев сысна фермисене арендăна илчĕç. Çак ĕçе малалла аталантарасшăн.

2009 çулта район 65 çул тултарчĕ. Çакă пире хамăр ĕçре ответлăрах пулма хистерĕ. Районăн ырă йăли-йĕркисене пĕтĕмлетсе, çĕр ĕçĕн паттăрĕсене сума суса, «Хвала рукам, что пахнут хлебом» кĕнеке кăлартăмăр. Çавăн пекех ял çыннисене информаци илме пулăшас, ял тăрăхĕсемпе, предприятисемпе, организацисемпе тачă çыхăнса ĕçлессине вăйлатас тĕллевпе çĕнĕ телефон справочникне хатĕрлесе районта пурăнакансем патне çитертĕмĕр.

Промышленность предприятийĕсенчен «Муркашри сĕт-çу завоĕ» акционерсен уçă обществи йĕркеллех ĕçлесе пырать. Анчах та район аталанăвне пысăк тӳпе хывакан «Сеспель» акционерсен хупă обществи тата «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществи пĕр вăхăт йывăрлăха кĕрсе ӳкни промышленность предприятийĕсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ çине те витĕм кӳчĕ. Сăлтавĕ кунта – вĕсем туса кăларакан продукцине туянакансен кредит илме йывăртарах пулни.

Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш плане те тултарма çăмăлах мар паян. Апла пулин те 2009 çулта ăна пĕтĕмпе 700,0 миллион тенкĕлĕх пурнăçланă е 2008 çулхинчен 2 процент ытларах. Йывăрлăхсене пăхмасăрах çĕнĕ 18 суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятине уçнă. Çапла майпа 44 çынна ĕçе вырнаçма майсем туса панă. Халăха тӳлевлĕ пулăшу парасси те кăштах ӳсрĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Кĕскен

# 400-мĕш пепке кун çути курнă

2009 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕ район администрацийĕн ЗАГС пайĕнче ĕçлекенсемшĕн илемлĕ те çав вăхăтрах пăлхануллă самантран пуçланчĕ: районĕпе 400-мĕш ача çуралнин актне çырчĕç çав кун. Палăртса хăвармалла, иртнĕ 2008 çулта пĕтĕмпе 400 ача çуралнине регистрациленĕ.

Хăйсен ачин чи пĕрремĕш документне – çурални çинчен паракан свидетельствăна тивĕçнисем – Муркашра пурăнакан Алина Георгиевна тата Сергей Дмитриевич Паладьевсем. Декабрĕн 23-мĕшĕнче вĕсен çемйинче иккĕмĕш ача – ывăл çуралнă. Ăна Валерий ят пама килĕшнĕ. Латин чĕлхинчен куçарсан вăл вăйлă, сывлăхлă пулассине пĕлтерет.

Чăннипех те çемьере ача çурални – палăрăмлă пулăм, уйрăмах ашшĕ-амăшĕшĕн. Шăпах ĕнтĕ ачасем пирĕн пурнăçа çутăрах та илемлĕрех тăваççĕ, ăшăпа тата шанчăкпа тултараççĕ, малашлăха шаннипе тивĕçтереççĕ.

Халĕ вара пурне те: ашшĕ-амăшне те, кун çути курнă пепкене те çирĕп сывлăх, телей те юрату суннă пулăттăмăр.

# «Çĕнĕ çулхи хула маçтăрĕсем»

Районти историпе краеведени музейĕнче Çĕнĕ çул уявĕ умĕн çулленех хăйсен аллисемпе хатĕрленĕ елка хатĕрĕсемпе открыткăсен выставкине йĕркелеççĕ. Декабрĕн 25-мĕшĕнче кунта «Новогоднее чудо своими руками» выставка уçăлчĕ. Кăçал «Çĕнĕ çулхи хула маçтăрĕсем» конкурс иртерессипирки район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасен пултарулăх çурчĕ пĕлтернĕччĕ. Ала ĕçĕсене çак номинацисемпе йышăннă: «Новогодняя игрушка нашей семьи», «Самая оригинальная елка», «Новогодний сувенир» (Тигр çулталăкне халалланă), «Рождественский подарок», «Креативный валенок», «Гламурные варежки», «Новогодние открытки», «Пăхакансен кăмăл туртăмĕн призĕ».

Чи илемлĕ те хăйне евĕр экспонатсене районти историпе краеведени музейĕн выставка залĕнче 2010 çулхи январĕн 16-мĕшĕччен вырнаçтарнă. Çĕнĕ çул тĕлĕнтермĕшĕсене курма васкăр, тĕлĕнмелли пуррине ĕненĕр, хăвăра уяв парнелĕр!

**Хамăр инф.**